К.В. Иванов ҫинчен: Глуховская станцинчи учительница Мария Даниловна Ковалева аса илни] / Н. Данилов ҫырса илнӗ
// Чӑваш коммунӗ. – 1940. – 18 юпа.

# К. Иванов ҫинчен Глуховская станцинчи учительница Мария Даниловна Ковалева аса илни

Эпӗ те, Константин Васильевич пекех, Склапусӗнче ҫуралнӑ. Ялти шкултан пуҫласа учительницӑна тухиччене эпӗ унӑн йӑмӑкӗпе Мария Васильевнӑпа пӗрле вӗреннӗ. Ҫавӑнпа та манӑн хӑшпӗр чухне Константин Васильевич пурнӑҫне те ҫывӑх курса сӑнама тӳрӗ килнӗ.

Ялта вӗреннӗ чухне эпӗ вӗсен килне час-часах кӗркелесе тухнӑ. 1909 — мӗш ҫулта Чӗмпӗрте вӗренме тытӑннӑскере Константин Васильевича час-часах куркаланӑ.

Чӗмпӗрте пурӑннӑ чухне Константин Васильевич букварь кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлетчӗ. Вӑл чӑваш чӗлхине лайӑх пӗлнине питӗ хаклатчӗҫ. Астӑватӑп: эпир старший классенче вӗреннӗ чухне пире букварь валли тӗрлӗ предложенисем шухӑшласа тупма калатчӗҫ. Вара ҫав предложенисене комиссипе сӳтсе-яватчӗҫ те, юрӑхлӑ пулсан букваре кӳртетчӗҫ. Хам тупса панӑ пӗр предложенине эпӗ халӗ те астӑватӑп-ха: «Ула лаша хашкаса, ака тӑвать васкаса», тенӗччӗ эпӗ. Ҫак комиссире Константин Васильевич та ӗҫлетчӗ.

Константин Васильевича ҫынсемпе калаҫсах кайнине курман эпӗ. Вӑл шавах майӗпен лӑпкӑн, пӗрех май тем ҫинчен шухӑшласа ҫӳретчӗ. Ҫынсемпе шӳт туса калаҫнине те илтмен.

Пӗрре ҫапла ӗҫ пулса иртрӗ: хампа пӗрле вӗренекен пӗр хӗрачапа шкул картишӗнче Константин Васильевич хыҫӗнчен пыраттӑмӑр. Юлташ манӑн шӳт тума юратаканскерччӗ.

— Константин Васильевича хамӑр енне ҫавӑрӑнтарса пӑхтарам-и—терӗ вӑл.

Эпӗ сӑмах та чӗнмо ӗлкӗреймерӗм. Сиккелесе пынӑ май кунӑн, хӑй те кӗтмен ҫӗртен, уринчи калушӗ ыткӑнса кайрӗ те, Константин Васильевича пальти аркинченех пырса лекрӗ. Вӑтанса кайнипе эпир ниҫта кайса кӗме пӗлмерӗмӗр. Анчах Константин Васильевич пире пӗр сӑмах та чӗнмерӗ. Ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те, малалла утрӗ.

Ҫӗнӗ зданире вӗреннӗ чухне пӗрре чуть ҫеҫ пысӑк инкек пулса тӑмарӗ. Пӗр ҫамрӑк ача каҫхине хӑйсем ҫывӑракан спальняна тем пысӑкӗш лампа йӑтса пынӑ. Ӑнсӑртран постель ҫине ӳкнӗ те, лампа ванса кайнӑ. Юхса тухнӑ краҫҫына вут хыпнӑ илнӗ, маччана ҫитиех ялкӑша пуҫланӑ. Классенче урок вӗренсе ларнӑ хӗрсем коридора чупса тухнӑ та, шӑри-шари ҫуйӑху тапранса кайнӑ. Хӑшӗ-пӗри чӳречерен сикме тӑнӑ. Кӑшкӑрнӑ сасса илтсе Константин Васильевич та васкаса тухнӑ, анчах пӗртте пуҫне ҫухатман. Хӑй патӗнчен одеялсем, простынсем илсе тухса ҫулӑма туххӑмах пусарса лартнӑ. Вара ҫавӑнпа та унӑн чылай япалисем ҫунса, пӑсӑлса пӗтнӗччӗ.

Политикӑллӑ шухӑш-ӗмӗчӗсем Константин Васильевичӑн пӗтӗмӗшпех 1905-07 ҫулсенче палӑрса ҫитнӗ пек туйӑнать мана. Ҫавӑнпа вӑл. ашшӗ ӑна темӗн чухлӗ килне таварӑнма чӗннӗ пулсан та, килӗнче пурӑнма аврӑнасшӑн пулман. Ун вырӑнне вӑл эпле те пулин Чӗмпӗртех литература ӗҫӗпе тӑрӑшса ӗҫлесшӗн пулнӑ. Таван халӑхне вӑл ҫавӑнпа усӑ кӳтартасшӑн пулнӑ. Урӑх ӗмӗт пулнӑ пулсан, Константин Васильевич та, паллах, ашшӗ пурлӑхӗпе усӑ курса, хӑйӗн ытти юлташӗсем пек, урӑх шкулсенчен вӗренсе тухма пултарнах ӗнтӗ.

Юлашки хут Константин Васильевича эпӗ вилес умӗн темиҫе кун малтан курса юлтӑм. Вӑл ҫулхине эпӗ Киргиз-Мияки районӗнчи Гайны-Ямаково ятлӑ тутар ялӗнче вӗрентсе пурӑнаттӑм. Пӗр пушӑ кун эпӗ киле курма таврӑнсаттӑм та, Константин Васильевич килӗнче чирлӗ выртни ҫинчен илтсе пӗлтӗм. Ҫавӑнтах ун патне курма чупса кайрӑм. Тап-таса вырӑн ҫинче выртакан Константин Васильевич мана пӗчӗкҫеҫҫӗ пек туйӑнса кайрӗ. Эпӗ, ӑш-чик ҫуннипе, чӑтаймасӑр:

—Эх, Константин Васильевич пурнӑҫӗ, чечек пекех шанать ӗнтӗ,—терӗм те, йӗрсе ятӑм.

Константин Васильевич куҫне уҫрӗ те, эпӗ курма пынишӗн савӑнса, манран шкулта ӗҫленисем ҫинчен ыйтса пӗлме тытӑнчӗ.

— Йывӑр мар-и ӗҫлеме? Мӗнле букварь тӑрӑх вӗренетӗр? Лайӑх вӗренеҫҫе-и тутар ачисем? — теме пуҫларӗ.

Кӑшт калаҫать те, ывӑннипе куҫне хупса выртать. Унтан каллех калаҫма тапранать. Ҫапла калаҫа-калаҫа йӑлтах халран кайрӗ те, ҫывӑрчӗ. Эпӗ, кӑштах ларсан, тухса кайрӑм.

Вилсен, ман патӑма пытарма пыма лав янӑччӗ. Анчах эпӗ ҫитсе ӗлкӗреймерӗм.

**Н. ДАНИЛОВ ҫырса илнӗ.**

---

Мария Даниловна каланӑ предложенине 1914-мӗш ҫулта тухнӑ букварьте пичетленӗ. —Н. Д.